Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӰШĔН

Юнкун
2007 ç., пуш, 14

20–21
/8938–8939/№№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен кунĕ умĕн район администрацийĕн ларусен залĕнче нумай ачаллă хĕрарăмсен тĕлпулăвĕ иртрĕ. Вĕсене çурхи илĕртӳллĕ уяв ячĕпе чун-чĕререн саламланă май, район пуçлăхĕ ачасене пăхса ӳстерес ĕçе калама çук пысăк тӳпе хывакан амăшĕсене тав турĕ, малашнехи пурнăçра ырлăх-сывлăх курма ăнăçусем сунчĕ. Анатолий Иванович хĕрарăма – ача амăшне халалланă сăвва пысăк çĕкленӳпе вуласа пană хыççăн залра ларакансем хыттăн алă çупрĕç.**



# НУМАЙ АЧАЛЛĂ АМĂШĔСЕНЕ ЧЫСЛАСА

Районти нумай ача амăшĕсене уяв ячĕпе ăшă сăмах калама Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕн генеральнăй директорĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регионти уйрăмĕн политканашĕн членĕ В. В. Свешников килнĕ. Вăл Чăваш Республикин Президенчĕ, Президент Администрацийĕ ячĕпе Чăваш Республикин Президенчĕн 2007 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче 14-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн ачисене воспитани парас тата çемье йăлисене çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Хисеп грамотипе пирĕн районтан тивĕçнĕ нумай ачаллă амăшĕсене: Галина Анатольевна Тарасовăпа (Малиновка) Маргарита Николаевна Чернована (Пăкăян) çав наградăсене пачĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн çӳлерех асăннă Указĕпех пирĕн районти Кирово ял тăрăхĕн ертсе пыракан специалисчĕ Лия Михайловна Языкова та нумай çул хушши ăнăçлă тăрăшса ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Чăваш Республикин Хисеп грамотине тивĕçнĕ. В. В. Свешниковран хаклă наградăна илнĕ хыççăн Л. М. Языкова сăмах илчĕ, хăйĕн ĕçне çапла хакланăшăн вырăнти хăйтытăмлăх, район, республика пуçлăхĕсене чунтан-вартан тав турĕ, ӳлĕмрен те халăх ырлăхĕшĕн вăй-халне шеллемесĕр ĕçлеме шантарчĕ.

Районти нумай ача çуратса ӳстернĕ хĕрарăмсен ушкăнĕ районăн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ. Тĕлпулура район пуçлăхĕ А. И. Петров çав наградăсене тата асăнмалăх парнесене (вĕсене «Ибреси – Согласие» потребкоопераци хатĕрленĕ) савăнăçлă лару-тăрура пачĕ.

Тĕлпулу умĕн зала пуçтарăннисене Йĕпреçри искусствăсен шкулĕн вокалпа хореографи уйрăмĕсене çӳрекенсем хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***
***Д. ДИМИТРИЕВ***
***сăнӳкерчĕкĕ.***

# КУЛЬТУРА ĔÇЧЕНĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

**Пăкăян тăрăхĕ нумаях пулмасть районти культура ĕçченĕсене хапăл туса йышăнчĕ. Кунта вĕсен анлă канашлăвĕ пулса иртнĕ.**

Канашлăва пуçтарăннисем малтанах Пăкăянти культура çурчĕ çумĕнчи модельлĕ библиотекăра пулса курнă. Библиотека заведующийĕ Е. Ф. Осипова хăнасене тăван ен аталанăвĕпе, кунта ĕçлесе пурăнакан ырми-канми ĕçченĕсемпе паллаштаракан слайдсем кăтартнă.

Культура çурчĕн фойинче алĕç япалисен куравне йĕркеленĕ, С. А. Соловьева клуб директорĕ курма пынисене вĕсемпе хапăлласа паллаштарнă. Ăста алăллă çынсем сахал мар ку тăрăхра, вĕсем тунă япаласем куçа илĕртмелле хитре, пăхса та тăранаймăн.

Канашлу пĕрремĕш ыйтупа (ертсе пыраканĕ Н. Кондратьева аслă методист) районта пултарулăх коллективĕсен фестивальне ирттерессипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă. Унтан кăçал паллă тăвакан Ача çулталăкĕнче мĕнлерех мероприятисем йĕркелесе ирттермелли çинчен калаçу пынă.

Вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. П. Егоров Пăкăянăн социаллă-экономикăллă аталанăвĕ çинчен каласа панă, унăн пуласлăхĕ çинчен чарăнса тăнă.

Канашлу тивĕçлĕ постановленисем йышăнса хăварнă хыççăн, пуçтарăннисем вырăнти культура вучахĕ çумĕнче ĕçлекен ача-пăчасен «Алладин» ятлă художествăлла пултарулăх коллективĕ (художествăлла руководителĕ Г. Д. Андреев) хатĕрленĕ «Хурăн уявĕ» композицине пăхса киленнĕ.

Культура ĕçченĕсен анлă форумне хутшăннисем Пăкăян тăрăхĕн администрацине, кунти культура ĕçченĕсене, Спотарти, Экономри культура «вучахĕсен» ертӳçисене – О. А. Николаевпа П. И. Николаева – мероприятие çӳллĕ шайра йĕркелесе ирттерме хутшăннăшăн чĕререн тав тунă. Канашлу пуриншĕн те усăллă та интереслĕ иртнĕ.

***С. ИВАНОВА.***

## ИНКЕК

# ВИЛМЕЛЛЕХ СУРАНЛАННĂ

**Çул çинче кирек хăçан та, кирек камăн та асăрхануллă пулмалли çинчен тăтăшах аса илтерсе тăратпăр пулин те, çакна хăлхана чикменнисем те тупăнаççĕ çав. Инкексем çине-çинех пулни те çакăн çинченех калать.**

Акă, мартăн 6-мĕшĕнче, 18 сехет те 35 минутра, Йĕпреç поселокĕнчи Союзная тата Молодежная урамсем хушшинчи асфальт çул çинче 51 çулти В. Е. Федоров гражданина машина таптаса кайнă. Урапа айне пулнă çын çавăнтах вилсе выртнă.

Инкекре, паллах, водителĕн айăпĕ те пур. Анчах вăл çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн сотрудникĕсем кунта килсе çитиччен инкек пулса тухнă вырăнтан тарса çухалнă. Оперативлă шырав мероприятийĕсене çийĕнчех пуçарса яни çынна таптанă машинăна шыраса тупма, унăн водительне тытса чарма май панă.

Инкеке хальхинче Йĕпреçре пурăнакан Г. Н. Иванов водитель тытса пынă ВАЗ-21099 маркăллă çăмăл машина çакланнă.

Ку факт тăрăх уголовнăй ĕç пуçарнă, халĕ следстви пырать.

***А. ЛУКЬЯНОВ,***
***çулçӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен инспекторĕ.***

## ХĔЛЛЕХИ ФУТБОЛ

# «ВОСТОК» – РАЙОН ЧЕМПИОНĔ

2007 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче хĕллехи футбол енĕпе район чемпионачĕ пуçланчĕ. Ăмăртусем малтан А тата Б зонăсенче Туçапа Йĕпреç поселокĕнче иртрĕç. Зонăсенчи çĕнтерӳçĕсемпе призерсем пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче Йĕпреçри иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул стадионĕнче хăйсен тупăшăвĕсене малалла тăсрĕç. Чемпионат йĕркелӳçисем – район администрацийĕн социаллă аталану пайĕпе Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕ. Пĕтĕмпе 11 команда вăй виçрĕ.

Пĕтĕмлетӳсем тăрăх «Восток» (Кĕлĕмкасси) пĕрремĕш, «Труд» (Буинск) – иккĕмĕш, «Темет» (Туçа) виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Вăйăсене çавăн пекех «Фурнитура» ООО, Эйпеç, Энтриел, Шăрттан ял тăрăхĕсемпе Йĕпреç хула тăрăхĕн тата Эйпеçпе Пысăк Упакасси, Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулсен командисем хутшăнчĕç.

***Й. АНДРЕЕВ,***
***ăмăртусен тĕп судйи.***

# ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМĂР!

**«Çĕнтерӳшĕн» хаçата «Чăвашпичет» АУО киоскĕнче 2007 çулхи иккĕмĕш çур çул валли ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен унччченхи хакпа – 120 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

# Район пуçлăхĕн ЙЫШĂНĂВĔ

## Районăн Хисеп грамотипе наградăласси çинчен

Ачасене воспитани парас тата çемье йăлисене çирĕплетес енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн нумай ачаллă амăшĕсене: **Надежда Ивановна АЛЕКСАНДРОВАНА** (Пучинке ялĕ), **Минданания Халиулловна ВАЛЕЕВАНА** (Буинск пос.), **Анна Николаевна ВИКТОРОВАНА** (Ленинкасси пос.), **Нина Петровна ЕРЕМЕЕВАНА** (Пăкăян пос.), **Светлана Григорьевна КИРИЛЛОВАНА** (Хурамал ялĕ), **Галина Григорьевна НОВИКОВАНА** (Тури Кĕлешкасси ялĕ), **Лидия Павловна СКВОРЦОВАНА** (Смычка пос.), **Зинаида Григорьевна СУРИНАНА** (Çĕнĕ Выçли ялĕ), **Людмила Альбертовна ЯКОВЛЕВАНА** (Туçа ялĕ) районăн Хисеп грамотипе наградăлас.

***А. ПЕТРОВ,***
***район пуçлăхĕ.***

Йĕпреç поселокĕ, 2007 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, 103№.

# ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Машинăсем тăвас ĕç отрасльне пысăк тӳпе хывнăшăн, чылай çул тăрăшса тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 60 çул тултарнă май «Фурнитура» тулли мар яваплăхлă обществăн тĕп механикне, техника пайĕн начальникне **Николай Григорьевич РАССЕЙКИНА** Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

х х х

Вĕренекен çамрăксене çарпа патриотла воспитани, тарăн пĕлӳ парас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата çуралнăранпа 50 çул тултарнă май Эйпеçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта ачасене пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсене вĕрентекен преподавателе **Владимир Васильевич ФИЛИППОВА** районăн Хисеп грамотипе наградăланă.

х х х

Халăхăн культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре чылай çул тăрăшуллă ĕçлесе пынăшăн Йĕпреç хула тăрăхĕн ача-пăча библиотекин заведующине **Елена Федоровна ГЛУХОВАНА** районăн Хисеп грамотипе наградăланă.

х х х

Чылай çул тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 50 çул тултарнă май «Интерьер» тулли мар яваплăхлă общество платникне **Федор Николаевич НИКОЛАЕВА** районăн Хисеп грамотипе чысланă.

х х х

Чылай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн «Йĕпреçри юсавпа техника предприятийĕ» муниципалитет унитарлă предприятин кадрсен пайĕн инспекторне **Алевтина Владимировна БУРМИСТРОВАНА** Йĕпреç районĕн Хисеп грамотине парса чыс тунă.

# ЧЕЧНЯНА ТУХСА КАЙНĂ

Республикăри МИХсем хыпарланă тăрăх, Чăваш милиционерĕсен пĕрлештернĕ отрячĕ (унта Чăваш Ен ОМОНĕн 30 тата милицин патрульпе пост службин 68 сотрудникĕ) çак кунсенче Çурçĕр Кавказа командировкăна тухса кайнă. Вĕсем Чечня Республикин Шелковски районне кĕрекен Червлянăй станцинче йĕркелĕхе сыхлĕç. Çак йышра Йĕпреç районĕнчи шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекен милици капитанĕ Николай Павлович Ласточкин та пур. Айăпа кĕнисене вăхăтлăха хупса усрамалли изолятор пуçлăхĕ ултă уйăх тăсăлакан командировкăра пĕрремĕш хут, вăл Чечняра хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçланă Владислав Павлова, пирĕн районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникне, улăштарнă.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

# САЛАМЛАТПĂР

Чи хаклă çыннăмăра, юратнă аттене, хисеплĕ хуняçана, ырă тĕслĕхлĕ асатте-кукаçине – Пучинкере пурăнакан **Илья Васильевич СИДОРОВА** – паян паллă тăвакан çуралнă кунĕ ячĕпе, 70 çулхи юбилейпа, ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç сукмакĕпе ӳлĕмрен те çĕнтерӳллĕн утма, тăван кил ăшшине упрама тапса тăракан çăлкуç шывĕ пек иксĕлми вăй-хал, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, шуçăм çути пек çутă ăраскаллă кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Саламлатпăр савса çемьерен,
Тав тăватпăр сана чĕререн...
Сывлăх пултăр мĕн ваталиччен,
Пурăнма сунатпăр 100 çулччен.

***АЧИСЕМ, КИНĔ,***
***КĔРӰШĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***

# НАЧИНАЕТСЯ ТЕХОСМОТР

16 МАРТА 2007 ГОДА возобновляется технический осмотр транспортных средств ОТОР ГИБДД г. Канаша. Всех желающих пройти техосмотр ждут на территории МУП «Ибресинское ремонтно-техническое предприятие» еженедельно, по пятницам.

При себе иметь все необходимые документы.

# АМĂШĔН ЮРАТĂВĔ



**Пăкăян тăрăхĕнче йышлă ача çуратса ÿстернĕ хĕрарăмсем сахал мар. «Ача амăшĕ-героиня» хисеплĕ ята илнĕ амăшĕ те пурăнать унта. Çакă мĕнпе çыхăннин сăлтавне тĕплĕн татса калаймăпăр, анчах та ытти çĕртипе танлаштарсан, ку тăрăхăн пĕр хăйне кăна тивĕçлĕ енĕсем те пур: йĕри-тавраллах – вăрмансем, хурăнлăхсемпе чăрăшлăхсене, икке уйăрса, кĕмĕлленсе юхакан пĕчĕк юханшывсем... Сывлăшĕ, сывлăшĕ мĕне тăрать! Çавăнпа та вăрманлă тăрăха ĕлĕкренех хир енчисем куçа-куçа ларнă. Пăкăянпа ун сывăхĕнчи ялсенче тĕпленнĕ çынсен хушшинче Вăрнар, Элĕк, Канаш, Красноармейски районĕсенчен куçнă çемьесем йышлă. Аслашшĕ-кукашшĕсем кăмăллана çĕр çинче паян çĕнĕ ăру ÿссе çĕкленет...**

Маргарита Николаевнăпа Виталий Германович Черновсем пĕр-пĕрне юратса çемье чăмăртанăранпа Пăкăян çумĕнчи вăрман çирĕм тăвата хутчен хăйĕн тумтирне улăштарчĕ. «Сак тулли ача-пăча ÿстерме» пил панă ваттисен сăмахне çирĕп пăхăнчĕç вĕсем, çак тапхăрта сакăр ача çуратрĕç, вĕсене сывă та тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерес тесе, хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Çăмăл пулмарĕ вĕсене тĕпренчĕкĕсене ура çине тăратма. Аслисем ашшĕпе амăшне пулăшма тытăннă хыççăн çăмăллăн сывласа ячĕç Ритăпа Виталий. Шăпа çапла пÿрнĕ пулĕ вĕсене, умлăн-хыçлăн тенĕ пекех хĕрсем килчĕç çут тĕнчене малтан: аслин, 1984 çулта çуралнă Динăн «урисем» çăмăл пулчĕç курăнать: аппăшне выляма тунсăхлă ан пултăр тенĕнех, тепĕр çултаlăкран Ксени тата икĕ çултан Александра, унтан Таиçпе Юля кил-йыша илем кÿчĕç. Ывăл çураласса тÿсĕмсĕррĕн кĕтекен ашшĕ, йăха тăсакан ку тарана çитсе те сасă пама васкаманнипе шалтах кулянма пуçланăскер, кăштах хĕрĕнкĕленсен, арăмне «йĕплесе» илме те тытăннăччĕ ĕнтĕ, анчах та Рита, шÿте урăх еннелле пăрса яратчĕ: «Амăшне чи малтан шанчăклă пулăшаканĕсем кирлĕ. Хĕр пĕрчисем пăртак çитĕнччĕр-ха. Эпĕ сана ывăл парнелĕп». Шÿт, чăнах та, чăнлăха çаврăнчĕ: 5 хĕр ача кăмăлне çырлахтарма килнĕ «çĕнĕ кайăк» ывăл пулчĕ. Ăна, аслашшĕне асра тытса, Герман ят хучĕç. Герман хыççăн Настьăпа Маша çуралчĕç.

Çапла вара, Черновсем йышлă ачаллă çемьесен йышне тăчĕç. Дина хĕрĕ те çемьеллĕ ĕнтĕ. Йĕпреçре пурăнать. Кукашшĕпе кукамăшĕ хăйсен пĕрремĕш мăнукне чĕрçи çине лартса утьăкка сиктереççĕ. Ксени – Кирово ял администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ, Александра Шупашкарти педколледжра, Таиç Йĕпреçри лицейра вĕренеççĕ. Ыттисем пурте Пăкăянти пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкула çÿреççĕ. Ашшĕпе амăшне, аппăшĕсене лайăх паллăсем илсе савăнтараççĕ.

Виталий Чернов Киров ячĕллĕ колхозра чылай çул механизаторта ĕçленĕ. Юлашки вăхăтра вара, хуçалăхра укçатенкĕ енчен йывăрлăхсем сиксе тухма пуçласан, вăл та вăйпитти арçынсемпе пĕрле Мускава кайса çÿреме пуçларĕ. Йышлă çемьене, çитменнине тата вĕренекен ачасене тивĕçлĕ условисем туса парас тесен, çемье пуçне ик хут, виç хут тăрăшарах вăй хума тивет. Виталин мăшăрĕ те пĕчĕклех хурашур сахал мар тутаннă. Тăлăха юлнăскер, Улатăрти ача çуртĕнче ÿснĕ вăл. «Патшалăх темĕнле тăрăшса пăхсассăн та, аттеанне юратăвне нимĕн те çитмест, – терĕ вăл, сăмаха хăйсен кил-йышĕ çине куçарсан. – Ачасем шкултан таврăнаççĕ те, эпĕ ĕçрен киличчен пурне те тума ĕлкĕреççĕ».

Маргарита Николаевна Пăкăянти «Юмах» ача садĕнче воспитательницăра ĕçлет. Кăçалхипе пиллĕкмĕш çул. Ачисем ялти шкула кайсан, амăшĕ виççĕри Маша хĕрĕпе ĕçе тухса утать. Каçченех садикра пулаççĕ вĕсем, килхуçалăхри лару-тăрушăн пăшăрханма сăлтав çук.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров 2007 çула Ачасен çулталăкĕ тесе палăртрĕ. Пирĕн республикăра ача амăшĕ пысăк хисепре пулни çинчен вăл Патшалăх Канашне янă Уçă çырура та уçăмлăн каларĕ. Нумаях пулмасть Президент алă пуснă Указ пичетленсе тухрĕ. Унпа килĕшÿллĕн, нумай ачаллă амăшĕсене Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă. Çак чыса тивĕçнисен хушшинче Пăкăянти Маргарита Николаевна Чернова та пур. Ача амăшĕсемпе район администрацийĕн çуртĕнче иртернĕ савăнăçлă тĕл пулура ăна çав наградăна тата кăкăр çине çакмалли паллăна пачĕç. Телей шевли çиçрĕ сакăр ача амăшĕн куçĕнче çавăн чухне.

– Маншăн тĕп награда – орден та, медаль те, грамота та мар, хамăр кун-çул пилленĕ ачасене телейсавăнăçлă тăвасси, вĕсене кун-çул тăрăх утса кайнă чухне пурнăç пĕлтерĕшне пĕлме, пĕрлешÿллĕ йыш вăйне хаклама вĕрентесси, – терĕ Маргарита Николаевна.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

**ŸКЕРЧĔКРЕ:** *сакăр ача амăшĕ М. Н. ЧЕРНОВА.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнÿкерчĕкĕ.***

# ĂНĂÇÇĂР ÇЕМЬЕСЕНЕ ТĔРĔСЛЕНĔ

**Çул çитмен ачасене право йĕркисене пăсасран асăрхаттарас, вĕсен саккунлă прависемпе интересĕсене хÿтĕлес, çавăн пекех ăнăççăр çемьесене палăртса шута илсе, çул çитмен ачасене воспитани тата пĕлÿ парассине мĕнлерех пурнăçланине тĕрĕслес тĕллевпе, РФ 1999 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче йышăннă, право йĕркисене пăснине «Никам та пăхман, кил-çуртсăр пурăнакан тата право йĕркисене пăсакан çул çитмен ачасен профилактикин тытăмĕн никĕсĕсем çинчен» саккунпа килĕшÿллĕн, район пуçлăхĕн 2006 çулхи кăрлачăн 19-мĕшĕнчи 32-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе ĕç ушкăнĕ туса хунă, вăл ял тăрăхĕсенчи тата хула тăрăхĕнчи ăнăççăр çемьесемпе «йывăр» ачасем патне тухса çÿрет.**

2007 çулхи пушăн 2-мĕшĕнче ĕç ушкăнĕ Йĕпреç хула тăрăхне çитрĕ. Ушкăнра – районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен ачасемпе ĕçлекен И. К. Богомолова инспектор, район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен ачасемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссин яваплă секретарĕ, юридици секторĕн тĕп специалисчĕ А. В. Петрова, «Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул» муниципалитет вĕрентÿ учрежденийĕн социаллă педагогĕ Н. В. Исакова пулчĕç. Тĕрĕслев вăхăтĕнче çул çитмен тăватă ача мĕнлерех лару-тăрура пурăннипе интересленнĕ. Акă, Çĕнĕ Шупашкарти 14-мĕш номерлĕ професси училищин администрацийĕ пирĕн район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен ачасемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссие янă çырура иккĕмĕш курсра виççĕмĕш группăра вĕренекен çамрăк практика ирттерессинчен пăрăннине, çур çулта икĕ предметпа аттестаци тухайманнине палăртнă. Ĕç ушкăнĕ çак çамрăкăн киленчи пурнăç условийĕсене тĕпченĕ. Ку вăхăт тĕлне вăл Çĕнĕ Шупашкар хулине практикăна тухса кайнă пулнă. Унăн ашшĕпе тата амăшĕпе профилактика калаçăвĕ ирттернĕ.

«Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул» муниципалитет вĕрентÿ учрежденийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, çул çитмен ачана пăхса тăракан Н. Фомина Мускава ĕçлеме тухса кайнă иккен. Тăххăрмĕш класра вĕренекен ача çав тапхăртан шкула çÿреме пачах «манса» кайнă. Класс ертÿçи ун патне пĕрре кăна мар пынă, анчах та ача ăна уçса кĕртмен. Ирĕке хăнăхнă ачапа «кĕрешес» ĕçре пур майсемпе те усă курса пĕтернĕ хыççăн, шкул дирекцийĕ ун пирки район администрацийĕн çул çитмен ачасемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссие пĕлтернĕ. Ĕç ушкăнĕ çав хыпара тĕрĕсленĕ. Ача, чăнах та, хăйне пăхса тăракансăр юлнă, шкула каяс шухăшпа пурăнман. Анчах та унпа калаçу ирттернĕ хыççăн вăл çакна лайăх ăнланса илнĕ. Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлÿ илесси – унăн пĕрремĕш тивĕçĕ, вăл шкула тăтăшах çÿреме сăмах панă. Тимсĕр пеккунăн вара, киле таврăнсан, район администрацийĕ çумĕнчи ятарлă комисси умĕнче право йĕркисене пăснă çын вырăнĕнче тăма тивĕ.

Ăнăççăр çемьесем тăрăх ирттернĕ тĕрĕслевсем хыççăн, комисси РФ Административлă право йĕркисене пăснин Кодексĕн 5, 35 статйипе («Çул çитмен ачасене воспитани парас, вĕсене пăхса усрас енĕпе ашшĕ-амăшĕсем е ытти саккунлă представительсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламанни») 2 административлă протокол, çул çитменнисен пурăнмалли çуртйĕрпе йăла условийĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн, тепĕр 4 акт çырнă.

***А. ПЕТРОВА.***

# СПРАВКА СЛУЖБИ ĔÇРЕ

**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2006 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 315-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ кăçалхи Ача çулталăкне хатĕрленсе ирттересси-пе çыхăннă мероприятисен планĕн 29 пунктне пурнăçласа тата ачасен ашшĕ-амăшĕсене, обществăлла организацисене право пĕлĕвĕсем парас тĕллевпе район пуçлăхĕ 2007 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Пулăшу шыратăп» справка службин Положенине çирĕплетесси çинчен» 99-мĕш номерлĕ йышăнăва алă пуснă.**

**«Пулăшу шыратăп» справка служби – пирĕн районти информаципе консультацин ялан ĕçлекен пункчĕ.**

«Пулăшу шыратăп» справка службинче çул çитмен ачасем, ашшĕ-амăшĕсем, вĕсене улăштаракансем тата ытти граждансем хăйсен ирĕкĕпе пулăшу ыйтма пыраççĕ, çак служба çул çитмен ачасен прависемпе интересĕсене пăснă тĕслĕхсем тăрăх васкавлăн мерăсем йышăнать; çавăн пекех çул çитмен ачасен саккунлă интересĕсемпе прависене хÿтĕлес енĕпе граждансемпе тата организацисемпе çыхăнса ĕçлет.

«Пулăшу шыратăп» справка службин тĕп тĕллевĕсем – çул çитмен ачасене право тĕлĕшĕнчен информаципе консультаци парасси, вĕсене, ашшĕ-амăшĕсене, вĕсен саккунлă представителĕсемпе ытти граждансене çул çитмен ачасен прависемпе интересĕсене хÿтĕлеме пулăшасси, социаллă службăсен патшалăхпа патшалăхăн мар тытăмĕнче граждансен прависемпе çыхăннă ыйтусем тăрăх социаллă тивĕçтерÿ парасси; çул çитменнисене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене, саккунлă представительсемпе ытти граждансене çемьесенчи тавлашуллă лару-тăрăва сирсе яма, кирлĕ документсем (тăлăх ачасемпе ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасене усрава илме, çемьен ытти формисемпе усă курма, çул çитмен ачасене вăхăтлăха социаллă службăна вырнаçтарма) хатĕрлесе пулăшасси халĕ вăйра тăракан законодательствăпа çирĕплетнĕ адвокатăн тÿлевсĕр пулăшăвĕ парасси; Чăваш Республикинчи ĕç тăвакан органсен, обществăлла организацисен, çавăн пекех çул çитмен ачасем право йĕркисене пăснине асăрхаса тăракан тытăмĕсен учрежденийĕсен, çавăн пекех çул çитмен ачасемпе, вĕсен çемйисемпе ĕçлекен ытти организацисен представителĕсене, служба умĕнчи задачăсене пурнăçлама явăçтарасси; массăллă информаци хатĕрĕсенче информаципе çутлăх ĕçне йĕркелесси; çул çитменнисен прависемпе вĕсене воспитани парас ĕç пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарасси.

«Пулăшу шыратăп» справка службин тĕп ĕçĕхĕлĕ – çул çитменнисене, граждансене йышăнасси, уйрăм темăсем тăрăх калаçусем ирттересси, телефонпа консультацисем парасси, графикпа ял тата хула тăрăхĕсене тухса çÿресси.

Консультацисене район администрацийĕн вĕрентÿ пайĕн психологипе педагогика центрĕн 2-33-17 номерлĕ «Шанăç телефонĕ», çавăн пекех район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен ачасен ĕçĕсен тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссин яваплă секретарĕ Анастасия Владимировна Петрова 2-12-29, район администрацийĕн вĕрентÿ пайĕн ачасен прависене сыхлакан специалисчĕ Елена Михайловна Федорова 2-19-99, район администрацийĕн юридици секторĕн пуçлăхĕ Владимир Николаевич Высоков 2-12-29, шалти ĕçсен пайĕ çул çитмен ачасемпе ĕçлекен инспекторĕсем Ирина Константиновна Богомоловапа Татьяна Николаевна Жарская 2-16-88 номерлĕ телефонсем тăрăх параççĕ.

«Пулăшу шыратăп» справка служби 2007 çулхи пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Энтриел ял тăрăхĕнче пĕрремĕш тĕл пулу йĕркелет.

***А. ПЕТРОВА, район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен ачасемпе тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссин яваплă секретарĕ, юридици секторĕн тĕп специалисчĕ.***

# КОНКУРСА ПĔТĔМЛЕТНĔ

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш Енри уйрăмĕ «Аннÿ валли открытка ÿкер» ятлă ача-пăча ÿкерчĕкĕсен конкурсне 100 ытла ача хутшăнчĕ. Комиссие ку хисепрен 5 ĕç кăна уйăрса илме çăмăл пулмарĕ. Çак ачасем çĕнтерÿçĕсем пулса тăнине палăртма кăмăллă: Рания Кемялтдинова (Йĕпреçри «Солнышко» ача сачĕ), Ирина Тихонова (искусствăсен шкулĕ), Анжела Прохорова (Чăваш Тимешри вăтам шкул), Оля Сорокина (Пысăк Упакассинчи «Колобок» ача сачĕ), Максим Карпов (Хумпуç Патăръелĕнчи пуçламăш шкул).

Республика шайĕнче вара ку ушкăнран чи кĕçĕнни – 5 çулхи Рания Кемялтдинова мала тухрĕ. Мартăн 8-мĕшĕнче шăп 6 çул тултарнă кун вăл çĕнтерÿçĕ ятне çĕнсе илни уншăн чи паха парнепе танлашрĕ.

Конкурса тăратнă ÿкерчĕксенчен Шупашкарти Ачасен пултарулăх кермеnĕнче курав йĕркеленĕ.

Конкурса Ирçе Çармăсри «Родничок», Пысăк Упакассинчи «Колобок», Йĕпреçри «Рябинка», «Радуга», «Солнышко»,- Пучинкери «Колосок», Энтриелĕнчи «Чĕкеç», Кĕлĕмкассинчи «Теремок», Чăваш Тимешри «Колосок» тата Пăкăянти «Сказка» ача сачĕсенчен ÿкерчĕксем ярса пачĕç.

Шкулсенчен вара Йĕпреçри 1-мĕшпе 2-мĕш, Хумпуç Патăръелĕнчи тата Тури Кĕлешкассинчи пуçламăш, Эйпеçри, Чăваш Тимешри вăтам, Энтриелĕнчи тĕп шкулсенчи ачасем хăйсен ĕçĕсене тăратнă. Йĕпреçри искусствăсен шкулĕ те конкурс айккинче юлмарĕ.

***Лариса ИВАНОВА, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Йĕпреçри уйрăмĕн ертÿçи.***

**АСĂРХĂР: ÇУЛ ÇИТМЕН ÇАМРĂК!**

# КĔСЪЕ ТЕЛЕФОНĔСЕМ ПИРКИЕХ ÇĔР ТĔРЛĔ ИНКЕК...

**Кăçал ку таранччен кĕсъере чиксе çÿремелли телефонсене çухатнă темиçе тĕслĕхе те шута илнĕ.**

Акă нумаях та пулмасть шкулта вĕренекен пĕр хĕрачан кукамăшĕ шалти ĕçсен районти пайĕн дежурнăй чаçне заявленипе килнĕ. Унăн мăнукĕн кĕнекесем чиксе çÿрекен сумкипе пĕрлех сотовăй телефонĕ те çухалнă иккен. Ĕç мĕнле пулса иртнине тĕпченĕ хыççăн çакă паллă пулнă: хĕрача шкултан таврăннă чух «Союзпичет» киоскĕ умĕнче чарăнса тăнă, сумкине прилавок çине хунă та ун çинчен манса та кайнă. Хăй вара киоскран кирлĕ япаласем туяннă та малалла сумкăсăрах ача-пăчасен пултарулăх çуртне занятине çул тытнă. Кружок хыççăн хĕрача пĕр шухăшсăрах килне кайнă. Киле таврăнсан тин сумка çинчен, унта чиксе хунă телефон çинчен аса илнĕ, хыпăнса ÿкнĕ. Кукамăшне вăл сумкăпа телефона ачасемпе çамрăксен пултарулăх çуртĕнче вăрлама пултарни çинчен хыпарланă. Шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем оперативлă шырав мероприятийĕсене йĕркелесе янă, йĕрлев вĕсене «Союзпичет» киоскĕ патне илсе çитернĕ. Хĕрача сумки шăпах çакăнта пулнă, вăл хăйĕн хуçи килсе илсе каясса кĕтнĕ...

Пĕр 12 çулти ача телефон вăрланă тĕслĕх те пулчĕ çак хушăра. Çак ачан ашшĕ-амăшĕсене ывăлĕ киревсĕр ĕç тунăшăн административлă майпа явап тыттарнă.

Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта, 10-мĕш класра вĕренекен хĕрача та, пĕчĕк мар пулин те, пĕр шăматкун пиллĕкмĕш урок хыççăн телефонне парта айне хурса хăварнă. Маннă вăл пурри çинчен, каçпа 18 сехетре тин аса илнĕ. Ашшĕ-амăшне çакăн çинчен пĕлтерме хăранă. Шалти ĕçсен пайне пулăшу ыйтма вырсарникун 12 сехетре тин пынă. Мĕн тетĕр, телефона тупса панă оперативниксем. Вăл парта айĕнчех «тунсăхласа» выртнă!

***И. БОГОМОЛОВА.***

# ЛУННЫЙ КАЛЕНДАРЬ ОГОРОДНИКА НА 2007 ГОД

## МЕСЯЦЫ, ДНИ БЛАГОПРИЯТНЫЕ ДЛЯ ПОСЕВА, ПОСАДКИ И ПЕРЕСАДКИ

| Культура | Март | Апрель | Май |
|---|---|---|---|
| Сладкий перец | 8-9, 13-14, 26-27 | 4-6, 22-23 | 1-3, 7-8, 19-20, 29-30 |
| Перец | 8-14 | 4-10 | 1-7, 29-31 |
| Томат | 8-14, 21-22, 25,27 | 4-10, 14-15, 19, 22-23 | 19-20, 29-31 |
| Капуста, цветная капуста | 21-23, 26-27 | 22-23, 29-30 | 1-3, 19-20, 26-30 |
| Редис | 5-14 | 2-10, 14-15 | 1-8, 11-14 |
| Редька | 6-9, 13-14 | 2-6, 9-10 | 1-3, 7-8, 13-14 |
| Свекла, брюква, репа | 6-9, 13-14 | 2-6, 9-11 | 1-3, 7-8 |
| Огурцы | 26-27 | 22-23 | 2-3, 19-20, 29-30 |
| Баклажан, кабачок, патиссон | 6-9, 26-27 | 2-5, 14-15, 22-23 | 1-3, 26-30 |
| Морковь, пастернак | 6-9, 13-14 | 2-5, 9-10, 29-30 | 2-3, 7-8, 19-20, 26-30 |
| Салат, шпинат | 21-22, 26-27 | 22-23, 29-30 | 1,3, 19-20, 26-30 |
| Сельдерей | 6-10, 13-14, 21-22, 26-27 | 2-6, 9-11, 22-23, 29-30 | 1-3, 7-8, 11-12, 19-20, 26-31 |
| Красная свекла | 5-9, 13-14 | 2-6, 9-10, 14-15 | 1-3, 7-8, 11-12 |
| Петрушка (зелень) | 23-27, 30-31 | 1, 20-23, 27-30 | 18-20, 24-28 |
| Петрушка (корень) | 3-9, 13-14 | 1-6, 9-10 | 1-3, 7-8, 11-12 |
| Укроп, | 3-7, 21- | 1-5, 19-23, | 1-3, 18-20, |

# БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ ХĂЙСЕН ĂСТАЛĂХНЕ ӲСТЕРЕÇÇĔ

Кĕнеке пулăшнипе çыннăн ăс-хакăллăхне йĕркелесси, çамрăксене вулама явăçтармалли, хальхи технологисем библиотекăсен кулленхи ĕçĕн йĕркипе инновацисем кĕртесси – çаксем тата çавăн пек пĕлтерĕшлĕ ытти темăсем Пĕтĕм тĕнчери Хĕрарăмсен уявĕ умĕн Йĕпреç хула тăрăхĕн тĕп библиотекинче ирттернĕ «Вулав – паянхи çын аталанăвĕн вăйĕ» «çавра сĕтел» калаçура малти вырăнта пулчĕç. Çав кун Ăс-хакăл çутлăхĕн çулталăкне халалланă 2006 çулта районти библиотекарьсем мĕнлерех ĕçленине пĕтĕмлетнĕ кун пулчĕ. Библиотекарьсем çамрăксене кĕнеке урлă воспитани панине, шкул ачисен çуллахи вăхăтри вулавне йĕркеленин опычĕпе, ялсенчи икĕ тата тĕп библиотекăра ирттернĕ «Вулакан Чăваш ен» социологи тĕпчевĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕç.

Паянхи ял çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре библиотекăсенче вăй хуракансен профессиллĕ ăсталăхне малалла ӳстерме хушма вăй-хал параканĕ районта сакăр çĕрте тĕслĕх библиотека уçни пулчĕ. Тĕпрен илсен, библиотекарьсем хăйсен тивĕçне тĕрĕс ăнланса пурнăçласа пычĕç.

Тĕлпулура кашни çулах ирттерекен «Библиоваци» конкурсăн пĕтĕмлетĕвĕсене турĕç. Ку тупăшу кĕнекене халăх хушшинче сарас, халăхăн культура, вĕренӳ, ăс-хакăлпа кăмăл-сипет шайне ӳстерес ĕçе хăйсен тивĕçлĕ тӳпине хывакан чи лайăх библиотекарьсене, спонсорсемпе вулакансене тупса палăртма пулăшать. Халăхăн ăс-хакăлпа кăмăл-сипетне ӳстерме хастар хутшăннăшăн Кĕлĕмкасси ял тăрăхĕн библиотекин пуçлăхне Маргарита Николаевна Бронникована Дипломпа чысланă. Информацисен çĕнĕ пулăшăвĕсене пуçаруллăн çул панăшăн çавăн пек дипломах Ирçе Çармăс ял тăрăхĕн библиотекин пуçлăхĕ Светлана Николаевна Акшарова тивĕçнĕ. Ял çыннисене экологи пĕлĕвĕсемпе паллаштарассине Хурамал ял тăрăхĕнчи Хумри Ишекри библиотека пуçлăхĕ Галина Васильевна Афанасьева чи лайăх йĕркеленĕ, ăна та дипломпа хавхалантарнă. Кирово ял тăрăхĕнчи библиотека пуçлăхĕ Елена Фоминична Осипова краеведени ĕçне лайăх туса пынăшăн диплома тивĕçнĕ. Ĕçе çĕнĕлле тата пултарулăха тĕпе хурса йĕркелеме пĕлнĕшĕн Пысăк Упакассинчи библиотека пуçлăхне Людмила Геннадьевна Семенована дипломпа хавхалантарнă.

Чăваш Тимеш ял тăрăхĕнчи Хумпуç Патăрьелĕнчи тата Тури Кĕлешкассинчи, Чăрăшкассинчи (Хурамал ял тăрăхĕ) библиотекăсен ĕçне уйрăммăн палăртнă.

«2006 çулхи чи лайăх вулакан» хисеплĕ ята Роберт Сергеевич Николаев çĕнсе илнĕ. Вăл çакна пичет сăмахне юратнипе кăна мар, хăй чылай çул хушши районти радиовещани редакцийĕнче ĕçленипе тивĕçме пултарнă.

Конкурс малалла пырать, унта хутшăнса тĕп библиотека ĕçченĕсем «Çулталăкри чи лайăх библиотекарь», «Библиотекăн чи лайăх уйрăмĕ», «Библиотекăн чи лайăх кăларăмĕ», «Чи лайăх сценари» тата «Библиотекăн чи лайăх тусĕ» номинацисенче çĕнтерессишĕн тупăшрĕç.

Çĕнтерӳçĕсене Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕнче – 2007 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче чысласçĕ.

***Н. ШИБАЛОВА,***
***тĕп библиотека методисчĕ.***

ШОУ-КОНКУРС

**Мартăн 8-мĕшĕ Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ пулнипе кăна мар, çуркуннепе илем, юратупа чĕрĕлӳ уявĕ пулнипе те пирĕн пурнăçа кĕрсе юлнă. Пирĕн поселокра çак илемлĕ уяв тĕлне «Йĕпреç поселокĕн ахахĕ» ятпа иртекен хаваслă конкурс программине йĕркелесе сцена çине кăларассине те йăлана кĕртрĕç. Унта Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан чи хӳхĕм те илĕртӳллĕ пикисем хутшăнаççĕ.**



# ЙĔПРЕÇ ПОСЕЛОКĔН АХАХĔ

Кăçал çак шоу-конкурс уяв умĕн, мартăн 7-мĕшĕнчи каç Йĕпреç хула тăрăхĕн культура çуртĕнче иртрĕ. Унăн тĕп спонсорĕ пулса «Связной центр» (руководителĕ Сергей Иванович Терентьев) хутшăнчĕ. Хăйсен пултарулăхне вара пилĕк хĕр-пике кăтартса пачĕç: Йĕпреçри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен Оксана Кривушова, Кристина Курдюмова, Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Дина Данилова, Кристина Максимова, Екатерина Мартынова «Йĕпреç поселокĕн ахахĕ» ята илессишĕн хĕрсех тупăшрĕç.

Хĕрсен пултарулăхне ултă тĕрлĕ тупăшура тĕрĕслесе пăхрĕç. Пĕрремĕш тапхăрта, «Паллаштару» конкурсра куракансене хĕрсем хăйсемпе паллаштарчĕç. Жюри (унăн йышĕнче Н. А. Андреев – Йĕпреç хула тăрăхĕн пуçлăхĕ, А. В. Петрова – район администрацийĕн юридици секторĕн тĕп специалисчĕ, А. В. Алексеев –ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ, И. А. Федорова – культура çурчĕн художество руководителĕ, Н. И. Романова – культура çурчĕ çумĕнчи халăх театрĕн режиссерĕ, С. Н. Скворцов – «Связной центр» компанин директорсен канашĕн членĕ) конкурсанткăсен пултарулăхне пур енлĕн пăхса пахаларĕ, хак пачĕ. Дина Данилован, Кристина Максимован тата Кристина Курдюмован визиткисем ыттисенчен лайăхрах пулса тухнине палăртрĕç жюри членĕсем.

Иккĕмĕш тапхăрта пикесен çăмăл мар ыйтусем çине хуравсем памалла пулчĕ. Ку ĕçе Дина Даниловапа Оксана Кривушова çăмăллăнах парăнтарчĕç.

Виççĕмĕш тапхăр, «Авангард» ятлă конкурс, чи интересли пулчĕ. Конкурсанткăсем вунă çул маларахри модăна мĕнле курса тăнине хăйсем пĕлнĕ пек кăтартса пачĕç. Тумсем хатĕрленĕ чухне хĕрсем мĕн тĕрлĕ кăна материалпа усă курман-ши! Тĕлĕнмелле, шпалера та, полиэтилен пленкине те хута яма пĕлнĕ вĕсем, тӳммесемпе те пĕлсе усă курнă.

Тепĕр конкурсра вара хĕрупраçсем амăшĕсене уяв саламĕ çырса пачĕç. Çав ăшă саламсене илтме питех те кăмăллă пулчĕ. Хĕрсем хăйсене кун çути пилленĕ амăшĕсене мĕнлерех юратни уççăнах сисĕнсе тăчĕ. Конкурсанткăсем пурте чи пысăк паллăна тивĕç пулчĕç.

«Ташăсен попурри» конкурсра вара жюри членĕсем пурте пĕр кăмăллă пулса Екатерина Мартынова пултарулăхне чи пысăк балпа хакларĕç.

Конкурс программине «Килти ĕçпе» вĕçлерĕç. Хĕрсем ку задание тăрăшса, тĕплĕн хатĕрленни тӳрех паллă пулчĕ. Шăпах çак ĕçре вĕсем хăйсен чăн-чăн талантне туллин уçса пама пултарчĕç. Оксана Кривушовапа Дина Данилова хатĕрленĕ сценка та, Кристина Максимова кăтартса панă хальхи вăхăтри ташă та, Кристина Курдюмова ташланă ташă та куракансен кăмăлне кайрĕç. Анчах Екатерина Мартынова ташланă хĕвел тухăç ташши вара пурин чун-чĕрине те хускатмаллипех хускатрĕ.

Конкурссем улшăннă тапхăрта Йĕпреçри ача-пăчасен пултарулăх çурчĕн «Мотылек» студи (ертӳçи Л. В. Зарубина), Йĕпреçри искусство шкулĕн воспитанникĕсем (ертӳçи С. В. Баранова) çĕнĕ ташăсемпе сцена çине тухрĕç. Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкулти В. Яронова, К. Курасова, Л. Политова тата вĕсен тусĕсем лартса панă номерсем те, И. Косов, Е. Казакова, А. Зарубина, И. Игнатьев шăрантарнă юрăсем те куракансене килĕшрĕç. Конкурс программине И. Ивановпа Р. Шукюрова ăста ертсе пычĕç.

Жюрие Йĕпреç поселокĕн кăçалхи чи илĕртӳллĕ пикине, ахахне палăртма питĕ йывăр пулчĕ. Нумай тавлашса сӳтсе явнă хыççăн, çак титула Екатерина Мартынована пама йышăнчĕç. Çĕнтерӳçĕне «Связной центр» компани представителĕ С. Скворцов тĕп призкĕсъе телефонĕ парса чыс турĕ. Куракансен симпатийĕн призĕпе кăçал тӳрех икĕ пикене хавхалантарчĕç. Çак приз хуçисем – Кристина Курдюмовапа Дина Данилова. Хĕрсенчен «Поселок фантазийĕ» ята Кристина Курдюмова, «Поселок грацийĕ» ята Дина Данилова, «Поселок илемĕ» ята Кристина Максимова, «Поселокăн ытарайми пики» ята Оксана Кривушова тивĕç пулчĕç. Вĕсене панă асăнмалăх парнесене Йĕпреçри ача-пăчасен пултарулăх çурчĕ, Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕ хатĕрленĕ.



***Э. ВОЛОДИН,***
***Йĕпреçри ача-пăчасен пултарулăх çурчĕн директорĕ.***

**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** *сцена çинче – конкурсанткăсем; «Йĕпреç поселокĕн ахахĕ-2007» ята тивĕçнĕ Е. Мартынова.*

***Н. РАЙМОВ сăнӳкерчĕкĕсем.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Уважаемую **ЛАВРЕНТЬЕВУ Зинаиду Ивановну** (п. Ибреси) с полувековым юбилеем! Желаем здоровья и долгих лет жизни.

Будь всегда судьбой согрета,
Останься духом молодой,
Пусть будет долгим «бабье лето»,
А осень – только золотой.

***ТВОИ КОЛЛЕГИ.***

x x x

Дорогую сестру, любимую подругу **Дзнеладзе Римму Васильевну,** проживающую в д. Ширтаны, горячо и сердечно поздравляем с юбилеем – 60-летием!

День рожденья – прекрасная дата,
Не беда, что уходят года,
Жизнь настолько светла и прекрасна,
Что не стоит грустить никогда.
Желаем быть всегда счастливой,
Доброй, милой, терпеливой,
Быть подольше молодой
И не стариться душой.

***С уважением ПЛОТНИКОВЫ, ЗАХАРОВЫ, КРАСНОВЫ.***

## САЛАМЛАТПĂР

«Камай уйĕнче» ачаран пĕрле выляса ӳснĕ пĕр шкулта вĕренсе пĕлӳ пухнă, мĕн паян кунччченех килĕштерекен çывăх юлташăмсене – Пучинкери **Илья Васильевич ВАСИЛЬЕВПА Николай Трофимович ШЕРНЮКОВА** чаплă юбилейсемпе – 70 çул тултарнă ятпа хăйсен ытамĕсене те кĕми пысăк, çу хĕвелĕ пекех хĕрӳ салам янă май, ӳлĕмрен те сывлăхлă та телейлĕ пулма, ачисемпе, мăнукĕсемпе ырлăх-телей курма, кил-çемье ăшшине упрама, тăвансемпе, кӳршĕ-аршăпа, ял-йышпа çураçуллăн пурăнма ăнăçу, таса ăраскалпа çутă ăшпиллĕх сунатпăр. Пирĕн çыхăнусем кирек хăçан та çирĕп, шанчăклă пуласса шанса тăратпăр.

Пĕр-пĕрин патне кайсах çӳрер, пĕр-пĕрне савăнăç кăна кӳрер.

***Йĕпреçре пурăнакан КУЗЬМИНСЕН çемйи.***

ООО «ВОЛЖСКИЙ КИРПИЧ»
**требуются электрики, гл. энергетик, сторожа, машинист бульдозера, машинист экскаватора. Тел.: 2-18-04.** 2-1

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

## ÇУРКУННЕНЕ ХАВАСЛĂН КĔТСЕ ИЛТĔМĔР

Чăваш Тимеш ялĕнче хĕле ăсатса çуркуннене кĕтсе илнĕ ятпа уяв иртрĕ. Сцена çинче шкул ачисем те, садике çӳрекенсем те, ялти культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕ те юрласа, ташласа савăнтарчĕç.

Илемлетнĕ çунасем кӳлнĕ лашасемпе ял тăрăх катаччи чупнине те куракансем киленсе пăхрĕç. Уçă сывлăшра йĕркеленĕ спорт вăййисенче çĕнтерӳçĕсем палăрчĕç. Шашкăлла вылякансем уйрăмах йышлă пулчĕç. Кĕçĕн çулхи ачасен хушшинче Дима Ягодов, аслисенчен Зоя Николаева мала тухрĕç. Ал вăйне виççе тупăшассипе Алевтина Козловапа Алик Морковкин чи вăйлисем пулчĕç. 24 килограмлă кире пуканне йăтассипе Александр Ижендеева çитекенни пулмарĕ. Хĕрсен хушшинче тупăшса, Алевтина Козлова пĕр пăтлă кире пуканне 40 хутчен çĕклерĕ. Хĕрсем те, арçынсем те футболла выляса тупăшрĕç. Каччăсемпе хĕрсем вĕрен туртрĕç. Уяв ячĕпе Нина Меркурьевна Батанова предприниматель («Ивушка» магазин) футболла вылякансене пылак кучченеçсемпе чысларĕ.

***Алена КОРНИЛОВА.***

## ХĔРАРĂМСЕМ КОНКУРСРА ТУПĂШРĔÇ

Мартăн 10-мĕшĕнче Шăрттанти культура «вучахĕнче» хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе «Леди Весна» конкурс иртрĕ. Конкурса пиллĕкĕн хутшăнчĕç. Хĕрарăмсен тĕрлĕ тĕрĕслев витĕр тухма тиврĕ: хăйсемпе паллаштарасси, тутлă апат-çимĕç хатĕрлесси, мода кăтартасси, пултаруллăх номерĕ.

Конкурсанткăсем пурте маттур пулчĕç. Алевтина Никитинапа (Шăрттан ял тăрăхĕн специалисчĕ) Лариса Корнилова илемлĕ юрăсемпе, Нина Хмелева (Хыркассинчи библиотека заведующийĕ) ташăсемпе куракансене савăнтарчĕç. Светлана Гладковапа (Огонек библиотекин заведующийĕ) Татьяна Шагаева (çамрăксемпе ĕçлекен специалист) кулăшла сценка лартса пачĕç. Лариса Корнилова мода кăтартас (вăл ялти шкулта повар пулса ĕçлет) енĕпе питех те хастар пулчĕ, вăл кил хуçи хĕрарăмне тĕрлĕ енлĕ сăнарласа пачĕ. «Леди Весна» ята чи нумай балл пухса Лариса Корнилова çĕнсе илчĕ те. «Озорная леди» ята Татьяна Шагаева, «Леди привлекательность» ята Нина Хмелева, «Леди обояние» ята Алевтина Никитина, «Леди скромность» ята Светлана Гладкова тивĕçрĕç. Участницăсене пурне те саламласа Шăрттан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. К. Ефремова пĕчĕк парнесемпе хавхалантарчĕ.

***З. ЯКОВЛЕВА, Шăрттанти культура çурчĕн художество ертӳçи.***

**ИБРЕСИНСКОЕ РАЙПО**
**закупает:**
**– картофель по цене 3 руб. 80 коп. за 1 кг.**
**– свеклу по цене 2 руб. за 1 кг.**
**– капусту по цене 2 руб. за 1 кг.**
**– гриб «Чага» – 20 руб. за 1 кг.**
**– березовые почки по цене 80 руб. за 1 кг.**
**Справки по телефону: 2-14-17.**
2-1

**МАГАЗИНУ «ЛИДЕР»**
**срочно требуются продавцы-консультанты – мужчины. Обр. на «Ярмарку», 2-й этаж. Телефон: 2-13-50.**
4-1

## ВЫРАЖАЕМ

сердечную благодарность участковому уполномоченному милиции ХОХЛОВУ Сергею Владимировичу и другим сотрудникам отдела внутренних дел по Ибресинскому району за оперативную помощь в раскрытии преступного деяния по факту мошенничества и за своевременный возврат определенной суммы в кассу хозяйственного магазина «Стройхозтовары» Ибресинского райпо.

Благодарим всех, кто принимал участие в расследовании и раскрытии данного дела. Пусть всегда сопутствует удача всем тем, кто стоит на страже общественного порядка и законности. Здоровья вам и благополучия!

***С уважением коллектив магазина «Стройхозтовары».***

**Коллектив РГУ «Ибресинский психоневрологический интернат» выражает глубокое соболезнование фельдшеру Ластухиной Г. В. по поводу кончины ее свекрови**
**ЛАСТУХИНОЙ**
**Акулины Андреевны.**

**Шăрттан ял администрацийĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, Огонек поселокĕнче пурăннă**
**Василий Андреевич**
**МИХАЙЛОВ**
**вăхăтсăр вилнĕ пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП “Вурнарский издательский дом”: 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП “Вурнарский ИД”. Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 2 п. л. Тираж 3220: чув. – 2380, русск. – 840. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком (Р)

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Тумаланова А. М.